# ПЕРЕМЕНКА

№ 17

НОЯБРЬ, 2023

ШКОЛЬНЫЕ СОБЫТИЯ

Чӑваш тӗрри кунне паллӑ турӑмӑр……2-4 с.
Пултарулӑхӑмӑр…………………….........5-7 с.

*********************************

Школьная газета основана
в феврале 2022 года
Основатели:
Ермошкина Раиса Николаевна
Сютова Кристина Васильевна

# ПЕРЕМЕНКА

**Чăваш тĕррин çуралнă кунне паллă турăмăр**
**тĕрĕ**
**чаплă, ĕлккен**
**куçа илĕртет, кăмăла çĕклет, кун-çула йĕрлет**
**Илемлĕ чăваш тĕрри тĕрлеме пĕлсен кăна.**
**иксĕлми пуянлăх**

Санарпуç вăтам шкулĕнче вĕренекен 5, 6, 7 класс ачисем Чăваш Тĕррин кунне уявларĕç. Тăван чĕлхепе литературăна вĕрентекен Ермошкина Раиса Николаевна ачасене Наталия Захарова-Кульевăн «Асамлă чăваш эрешĕсем» ятлă сăрласа илемлетмелли кĕнекипе паллаштарчĕ. Тĕрĕсен тĕсĕ-пĕлтерĕшĕсем çинче чарăнчĕ.

Чăваш эрешĕсем, чăнах та, питĕ асамлă. Пĕр салтака, 25 çул хĕсметре тăнăскере, тăван аппăшĕ хăй тĕрленĕ кĕскĕ тĕрĕпе кăна палласа илме пултарнă.

Н. Симуновăн «Сурпан тĕрри» хайлавĕнчи тĕп сăнар вара, сурпан çинчи тĕрре пула хăй тăванĕсене шыраса тупма пултарнă. Селезнев Василий Иванович Аргентинăра тарçă пулса асапланса пурăннă. Василий çăкăр çимелли юлашки укçапа Чăваш çĕрĕнчен Аргентинăна килнĕ чăваш тĕррисен выставкинче пулса курнă.

Икĕ хайлава аса илнĕ май: «Чăваш тĕрри вăл, Хĕвел евĕр, çутатса тăрать, çулран пăрăнса кайнисене çул кăтартать, аякри-инçетри çĕртен Тăван çĕр-шыва çаврăнса çитме пулăшать», - текен шухăш патне çитсе тухрĕç вĕренекенсем.

Тĕрĕ вăл - пир çине çырăнакан çыру. Кашни тĕррĕн хăйĕн хуçи, хăйĕн алли пур иккен. Тĕрĕре халăхăмăрăн иртнĕ кун-çулĕ те, пуласлăхĕ те, иксĕлми пуянлăхĕ те.

8-мĕш класс ачисене Смирнова Елена Дмитриев И.Д. ĕçĕсемпе паллаштарчĕ. Иван Дмитриевич, Утар ялĕнче çуралса ӳснĕскер, тĕрĕ ăсти пулнă. Унăн ĕçĕсем  нумай. Тултарса та, майра тĕррине те, тăваткал тĕрре те тума пултарнă ар çын-тĕрĕçĕ.

Тĕрĕ тĕрлеме амăшĕнчен Давыдова Таисирен вĕренсе юлнă, мĕн ачаранпах тĕрленĕ. Тĕрĕсене ĕлĕкхи открыткăсенчен, журналсенчен, урамра курнă пӳртсене курса тĕрĕ тĕрлеме юратнă. Тĕррисене хăй виличчен тăванĕсене асăнмалăх парса хăварнă, 80 çулчченех тĕрленĕ.

««Илемлĕ тĕрĕсем тăвас тесе тăрăшатăп. Чун туртнипе тĕрлетĕп. Тĕрĕ кăмăла çĕклет, чуна уçса ярать, пурăнма хавхалантарать, пӳрт ăш чиккине илемлетет», - тетчĕ тĕрĕ ăсти Иван кукка»», - тет Елена. Унăн ĕçĕсем: «Юратнă ялăм», «Капмар çуртсем», «Лĕпĕшсем», «Пăши пăрушĕ», «Юр пике», «Сетнер тунсăхĕ» т.ыт.те.

Чăваш тĕрри ламран-лама куçса пырать. Апла пулсан вăл вилĕмсĕр.





6+
АСАМЛĂ ЧĂВАШ ЭРЕШĔСЕМ
ЧУДЕСНЫЕ ЧУВАШСКИЕ УЗОРЫ
Книжка-раскраска






сдавайся
и
Действуй
ЮНАРМИЯ



















# ПЕРЕМЕНКА




**Паттăр ентешĕмĕр ячĕ вилĕмсĕр**

Мана Аня Тимофеева тесе чĕнеççĕ. Эпĕ 7-мĕш класра вĕренетĕп.

Пĕлтĕр пирĕн класа çамрăк патриотсен йышне илчĕç.

Кам-ха вăл патриот? Патриот вăл, ман шухăшпа, Тăван çĕр-шыва чун-чĕререн юратакан, хисеплекен, уншăн йывăр вăхăтра кар! тăма пултаракан, хăй пурнăçне шеллемесĕр паттăрла ĕçсем тума пултаракан çын.

Пирĕн отряд Александр Никонов ячĕпе хисепленсе тăрать. Вăл – çар çынни, Раççей Федерацийĕн «Барс» ятпа çӳрекен ятарлă отряд разведчикĕ пулнă. Украинăра пулса иртекен ятарлă операцире пуçне хунă. Çапăçура хăюлăх кăтартнăшăн Крап беретне тата Паттăрлăх орденне тивĕç пулнă.

Кăçал, çу уйăхĕнче Александр Никонов çуралса ӳснĕ Кăмаш ялĕнче паттăр салтак ячĕпе аллея уçрĕç. Пирĕн отряд та çак ырă ĕçе хутшăнчĕ. Туя йывăççи лартрăмăр.

Александр вил тăприйĕ çинче пултăмăр. Унăн палăкĕ умĕнче Тăван çĕр-шыва юратма, çĕр-шыв ирĕклĕхĕшĕн çапăçса вилнĕ паттăрсен ятне яланах асра тытма тупа турăмăр.

Кайран Никоновсем патĕнче хăнара пултăмăр, салтак пӳлĕмне кĕрсе куртăмăр.

Сăн ӳкерчĕксем çинче Саша чĕрĕ пекех курăнать. Янкăр кăвак куç, ăшă йăл-кулă.

Галина Димитриевнăпа Виталий Александрович пире ăшшăн кĕтсе илчĕç. Александрăн ашшĕпе амăшĕ пире яланах пылак кучченеçпе хăналаççĕ. Шкулта тăрăшса вĕренме, спортпа туслă пулма сĕнеççĕ.

Александр Никонов ашшĕпе амăшĕ йĕркеленипе çурла уйăхĕнче Хусан хулине çул тытрăмăр.

Александр салтак çар службинче тăнă «Барс» ятпа çӳрекен 26-мĕш ятарлă отряд чаçне çитсе куртăмăр. Спецназовецсен кун-йĕркипе, тум-тирĕпе, хĕç-пăшалĕпе, çар техникипе паллашрăмăр. Бронежилетне, 6 -7 кг яхăн таяканскерне, çĕклесех пăхрăмăр. Йывăр иккен салтак çĕклемĕ. Салтак пăттипе, кукăль-икерчĕпе сăйлантăмăр.

Акă Александр Никонов çывăрнă кровать. Ăна Раççей ялавĕпе типтерлĕн витсе хунă. Стена çинче Сашăн сăн ӳкерчĕкĕ, тумба çинче беречĕ…

Çул çӳрев пирĕн çамрăк чĕресенче паттăрлăх туйăмне вăратрĕ.

Паттăр ентешĕмĕрпе мухтанатпăр. Унăн çутă сăнарĕ пире яланах хавхалантарса тăрĕ, пурнăçра тĕрĕс çул кăтартĕ.

**Анна Тимофеева, Вăрнар округĕ, Санарпуç шкулĕ**

# ПЕРЕМЕНКА



**Ӳссен эсӗ кам пулан?**

Кашни çыннах ӳссе çитерехпе хăйӗн пурнăçри вырăнне тупасшăн. Манăн та пысăк ӗмӗт пур. Эпӗ тухтăр пуласшăн.

Тухтăр ӗçӗ питӗ йывăр ӗç тесе шухăшлатăп эпӗ. Унăн этем организмне питӗ аван пӗлес пулать. Тухтăр аллинче – çын пурнăçӗ, этемлӗх шăпи.

Маттур специалист пулас тесен шкул саккинченех тăрăшса вӗренес пулать: хими, биологи, анатоми предмечӗсене ачаранах шӗкӗлчес пулать.

Мӗнпе илӗртет-ха мана ку професси? Пур енчен те кăмăла каять.

Мӗн пӗчӗкрен «тухтăрла» выляма юрататтăм. «Чирлӗ» çынни манăн пуканеччӗ. Пӳрнине кастарать –и тусăм – аллине пӗтӗмпех бинтласа лартнă, температури хăпарса кайнă –и – градусник хул хушшинчех, шăнса пăсăлнă пулсан хăмла çырли варенинчен хатӗрленӗ чейӗ те пăслансах ларать. Итлемесен вара укол тума та пултараттăм.

Врач профессине алла илнӗ çын вăл, ман шухăшпа, яваплăха туякан, хăйне хăй темӗнле йывăр лару-тăрура та алла илме пултаракан çирӗп кăмăллă çын. Урăхла пулма та пултараймасть пуль тетӗп. Врач вăл çынна сыватакан, кирлӗ пулсан, вилӗмрен çăлса хăварма пултаракан çын.

Этем обществинче те тухтăрсене сума сăваççӗ, хисеплеççӗ.

Юратнă пичче те врача вӗренет. Унăн лекци тетрачӗсенчи латинла çырнă эмел ячӗсем, çын скелечӗсем мана кăсăклантараççӗ, ал айне лекнӗ кӗнекисене те вуласа пăхас килет.

Манăн тӗп тӗллев: шкултан лайăх паллăсемпе вӗренсе тухса хам суйласа илнӗ професси патне ăнтăласси. Тарăн пӗлӳ пуçтарса алла диплом илесси, ӗçе вырнаçасси, çынсене сыватасси, вӗсен кун-çулне вăрăмлатасси.

**Анастасия Семенова, Вăрнар округӗ, Санарпуç шкулӗ**



# ПЕРЕМЕНКА



**Тăван ялăм – Уравăш**
**ялăм**
**пысăк, илемлĕ**
**çĕнелет, капăрланать, чĕрĕлет**
**Тăван ялăм, эпĕ сана чун-чĕререн юрататăп**
**анне сăпки**

Эпĕ Уравăш салинче пурăнатăп. Яла икĕ енчен вăрмансем хупăрласа тăраççĕ. Пĕри – раща вăрманĕ, тепри вара – Малти вăрман.

Мĕнрен пуçланса кайнă-ха «раща вăрманĕ» тени?

Кукамай каласа панă тăрăх, I Петĕр патша вăхăтĕнче карапсем ăсталама çак вăрмантан кĕреш юмансене касса турттарнă-мĕн. «Карап ращи» тесе каланине те илтме пулать.

Çак вăрмана эпир – туслă çемье – кăмпа-çырлана çӳретпĕр. Уплюнкка, хура кăрăç, шур кăрăç тататпăр. Мăйăр та тупăнкалать.

Ял пĕвесемпе пуян. Мĕн ятли çук пулĕ: Шампунь пĕви, Симушкин пĕви, Петтюк пĕви, Курак пĕви, Уçка пĕви…

Пĕвесенче хур-кăвакал чăмпăлтатса савăнать. Çулла ача-пăча вăлтапа пулă тытать. Ытларах карас çакланать, сарри те пур.

Уравăш ялне Курак пĕви икке уйăрса тăрать: пĕри – Малти урам, тепри – Анаткас урамĕ. Хăш-пĕр урамра çулăн икĕ айккипе те йăмрасем ӳсеççĕ. Çуркуннепе çулла сип-симĕс ешерсе лараççĕ вĕсем. Сывлăша тасатса кислородпа пуянлатаççĕ. Сар хĕре аса илтерекен яштака хурăнсем, шур сухаллă ват асатте евĕр юмансем, йывăр инкекре мĕскĕн кайăка çăлса хăварса сип-симĕс тума тивĕç пулнă хырсемпе чăрăшсем тӳпенелле кармашаççĕ.

Ялта икĕ лавкка, культура çурчĕ, вулавăш пур. Ача-пăча площадкисем те шăпăрлана хăй патне йыхăраççĕ. Футболла выляс тесен – спорт площадки, волейбола выляс тесен – волейбол площадкисем пур. Выля кăна, ан ӳркен, сывлăхна çирĕплет.

Асăрхарăр пулĕ. Пирĕн ял Уравăш сали ятлă. Тĕрĕс ăнлантăр, чиркӳ пулнăран сала тенĕ.

Аслă пăлхавăрсем хыççăн чиркĕве пăснă пулнă. Халĕ вара лавккапа юнашар çĕнĕ чиркӳ çĕкленсе ларчĕ.

Чиркĕве Уравăш халăхĕ пурте пĕрле кар! тăрса, алла-аллăн тытăнса, пус çумне пус хушса, кирпĕч çумне кирпĕч хурса хăй вăйĕпе чĕртсе тăма пултарчĕ. Укçа-тенкĕпе пулăшакансем те чылайăн пулчĕç. Пурте тăван ял пуласлăхĕшĕн тăрăшаççĕ.

Эпĕ Уравăшра çуралса ӳснĕ. Тăван тавралăх илемĕпе, мухтавлă та хисеплĕ, ĕçчен çыннисемпе мăнаçланатăп. Тăван ял сывлăшĕ те уçăрах, тасарах, тутлăрах пек. Кăкăр туллин сывлас килет. Вăл, анне алли евĕр, ачашшăн çупăрлать, анне сăпки евĕр утьăкка сиктерет. Çунат хушать. Таçта аякка каяс пулсан та вăл хăй патне туртать, йыхăрать.

Ялăм, ĕмĕр пурăн, чечеклен!

**Эльдар Провалов, Вăрнар округĕ, Санарпуç шкулĕ**